

# Сумлă меслетçĕ, вĕрентекенсен вĕрентекенĕ

**Хамăра пурнăç çулĕ çинче çирĕп тăма пулăшнă вĕрентекенĕмĕр, чăваш ачисене вĕрентмелли программăсен, вĕренӳ кĕнекисемпе меслетлĕх кăтартăвĕсен авторĕ пирки сăмахăмăр. Ку вăл Михаил Константинович Волков – нумай çул хушши Раççей Федерацийĕн Вĕренӳпе наука министерствин Вĕрентĕвĕн наци проблемисене тĕпчекен институтăн Чăваш филиалĕн пуçлăхĕнче ĕçлесе пенси çине тухнăскер, «СССР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ», «РСФСР çут ĕç отличникĕ».**

М. Волков ертсе пынипе авторсен коллективĕ «Чăваш чĕлхине пуçламăш классенче вĕрентмелли программăсем», «Вырăс чĕлхине пуçламăш классенче вĕрентмелли программăсем», вырăс чĕлхине чăваш ачисене 1, 2, 3, 4-мĕш классенче вĕрентмелли учебниксем, «Чăваш букварĕ» тата вун-вун меслет кăтартăвĕсемпе дидактика пособийĕсем хатĕрлесе кун çути кăтартрĕ. Нумай çул хушши чăваш ачи-пăчи М. Волков кĕнекисемпе вĕренчĕ. Вĕренӳ институтĕнче учительсен пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе ирттернĕ занятисене ăçтан шутласа пĕтерĕн тата?

Михаил Константинович Шупашкар районĕнчи Ишлейре 1934 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнче çуралнă.

– Эпĕ филолог пулмасан та пултарнă, – каласа парать кăçал 80 çул тултаракан ятлă-сумлă педагог. – Ачаран кĕнеке вулама юратни шăпана татса пачĕ пулмалла. Интереслĕ кĕнеке алла лексен апат çиме манса кайсах, апат сĕтелĕ хушшинчех каçса кайса вуланă. Пурнăçĕ питĕ хĕсĕкчĕ. Çĕрĕçĕрĕпе кăмака умĕнчи чаршав хыçне пытанса вулаттăм. Çапах та краççын нумай çунтаратăн тесе вăрçнине аттерен те, аннерен те илтмен.

Ишлей ун чухне район центрĕччĕ. Район библиотекинче вуламан кĕнеке хăварман та темелле. Кӳршĕре пурăнакан тантăшăм Миша Степановпа ăмăртмалла вулаттăмăр. Вăл сăмах çаптарма ăстаччĕ. Унранах литературăна юратма, хам та сăвă-калав çыркалама вĕрентĕм темелле. Халĕ шутлатăп та, ачаранах литературăпа паллашни пичетленĕ сăмах асамлăхĕпе киленме вĕрентрĕ, пурнăçăма ĕмĕрлĕхех сăмахлăх тĕнчипе çыхса хучĕ.

Вăтам шкул пĕтерсен ăçта каймалла-ши текен ыйту тăман Мишша умĕнче. 1951 çулта Чăваш патшалăх педагогика институтĕн студенчĕ пулса тăрать. Чăваш уйрăмĕнче ку çулсенче студентсен пурнăçĕ паянхинчен те хĕрӳрех вĕресе тăнă. Студентăн пур çĕрте те ĕлкĕрмелле: вĕренӳре те, спортра та, канура та. М. Волков Н. Ларионов, Б. Тихонов (Борлен) тата ытти юлташĕсемпе пĕрле литература кружокĕн ĕçне хастар хутшăнать. Шкул çулĕсенче вĕренмелле тенĕ пек çырнă сăвви-калавĕсене сумлă çыравçăсене (П. Хусанкай, Я. Ухсай, М. Илпек, А. Воробьев) хаклаттарать. Çакна палăртмалла: 50–60-мĕш çулсенче чăваш çыравçисем пединститутра тăтăшах пулнă. Хăйне евĕрлĕ литсеминарсем теме пулать вĕсем литкружок членĕсемпе тĕл пулса ларусем ирттернине. Сăмах ăстисен сĕнĕвĕсене шута илсе вĕрентекенĕмĕр хайлавĕсене тепĕр хут юсаса çырать. «Тăван Атăл», «Ялав» журналсемпе çыхăнать. Темиçе сăввине пичетлесе кăларать, вырăсла хайлавсене чăвашла куçарать.

Спортра та хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнать вăл. Факультетри йĕлтĕрçĕсем хушшинче чи малти. Вăтам дистанцисене çуран чупса çулсерен малти вырăнсене йышăнать. Чăваш уйрăмĕнче вĕренекенсенчен Михаил Волков спортсмен ятне пĕлменни пулман та. Ахальтен мар спортри çитĕнӳсемшĕн ăна «Урожай» спорт обществин тава тивĕçлĕ тренерĕ» хисеплĕ ят параççĕ. Спорт вĕренӳре те пулăшса пынă. М. Волков института хĕрлĕ дипломпа вĕренсе пĕтерет.

Хастар çамрăка С. Горский профессор аспирантурăна кĕме сĕнет. Анчах та шкулта ĕçлесе пăхас, теори пĕлĕвĕсене практикăра туптаса пăхас кăмăл вăйлăрах пулнипе Михаил Константинович Канаш районĕнчи Аччари вăтам шкула чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме каять. Çапла майпа нумайлăха шкул ĕçĕ ăна хăйĕн ытамне илет. Совет çарĕнче салтак тивĕçне пурнăçласа килнĕ хыççăн тĕрлĕ çулсенче Çĕрпӳ районĕнчи Вăтакасси, Метикасси, Чурачăк шкулĕсенче вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет, Еншик Чуллăри вăтам шкул директорĕн çумĕ, Чурачăкри вăтам шкул директорĕ пулса ĕçлет. Пĕр хушă Çĕрпӳ районĕнчи шкулсен инспекторĕ, «Октябрь çулĕ» райхаçат редакторĕн çумĕнче те тăрăшать, хаçатăн вырăсла куçарăвне кăларассине тимлет.

Пединститута тепĕр хут заочно майпа вĕренме кĕрет Михаил Константинович. 1963 çулта вара вырăс чĕлхипе литератури факультетне ăнăçлă пĕтерет те Мускаври наци шкулĕсен тĕпчев институчĕн аспирантурине куçăмсăр йĕркепе вырнаçать. Институтра тĕнчипе паллă меслетçĕсем ĕçленĕ. Вĕсемпе ĕçлĕ калаçусем ирттерни, лингводидактика ыйтăвĕсемпе тавлашни чăваш тĕпчевçин ăс-пуçне çивĕчлетме чылай пулăшнă.

Планпа килĕшӳллĕн, харпăр хăй шухăшĕсене çирĕплетес тĕллевпе аспирант меслет тĕпчевĕсем тăвать, диссертаци хӳтĕлеме хатĕрленет. Çĕрпӳ районĕнчи Чурачăк, Муркаш районĕнчи Москакасси шкулĕсенче хăй хатĕрленĕ материалсене практикăра сăнаса пăхать. 1971 çулхи çĕртмен 21-мĕшĕнче вара Мускавра «Чăваш шкулĕн 5–7 класĕсен вырăс чĕлхи урокĕсенче ачасене харпăр хăй тĕллĕн ĕçлеттересси» темăпа кандидат диссертацийĕ ăнăçлă хӳтĕлет, педагогика наукисен кандидачĕ пулса тăрать. Ăна çав çулах РСФСРти çут ĕç министерствин наци шкулĕсен тĕпчев институтĕнче наука сотрудникĕ пулса ĕçлеме хăвараççĕ.

Шупашкарта та 1972 çулта ку институтăн Чăваш лабораторине уçаççĕ. Малтанхи пуçлăхĕ Л.П. Сергеев пулать. Лаборатори лавне çавăн пекех

Г.Н. Волков, Р.Н. Петрова, М.К. Волков туртаççĕ. Каярахпа йыша З.С. Антонова, Т.В. Артемьева, Н.И. Прокопьев, О.И. Печников, В.Н. Романов, Г.В. Лукоянов, А.Р. Кульева хутшăнаççĕ.

Шел пулин те, демократипе çĕнетӳ саманишĕн лаборатори ĕçĕ-хĕлĕ ытлашши пулса тухать. Паян ун çинчен эрлĕк кăмăлпа аса илмелли çеç юлчĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн пăтрану тапхăрĕччен чăваш лингводидактики тухăçлă наука пек йĕркеленсе çитнĕччĕ, тĕнче шайĕнче аталанса пыратчĕ. Лаборатори сотрудникĕсен йышĕ пысăках пулмасан та вĕсем ача сачĕсемпе пуçламăш шкулти вĕрентӳ проблемисене социологипе психологи, методикăпа педагогика сăнавĕсемпе экспериментсем урлă тишкерсе татса паратчĕç. Кашни шкул учебникĕ экспериментла тĕрĕслев витĕр шăранса тухатчĕ. Çак лаборатори республикăри чăваш тата вырăс учебникĕсен авторĕсене пĕрлештерсе тăнă. Вăл е ку учебника пичете яриччен еплерех хĕрӳ тавлашусем пулса иртни асрах. Семинарсем, çавра сĕтелсем, тĕрлĕрен канашлусем... Пирĕн шутпа, чăваш чĕлхипе литературине вĕрентессине ятарлă тĕпчевсем ирттерсе, экспериментсем туса пĕтĕмлетекен, тухăçлă çул-йĕрсем палăртакан тĕпчев учреждениине (хупăннă Чăваш лабораторийĕ пекки) паян тепĕр хут йĕркелесен аванччĕ.

М.К. Волков 1–4 классенче чăваш ачисене вырăс тата чăваш чĕлхисене тухăçлăрах вĕрентес ыйтусемпе ĕçлет. Шкулсене тухса çӳрет, тĕпчевсем ирттерет, статья хыççăн статья çырса Шупашкарта, Мускавра тата ытти хуласенче тухса тăракан журналсенче пичетлет, кĕнекесем çырать. А.В. Рыбакова, Ф.Ф. Тринитатова, З.Ф. Мышкин тата ыттисем пулăшнипе кĕске вăхăтрах вырăс чĕлхине тухăçлăрах вĕрентме май паракан 1–4 классен учебникĕсене хатĕрлесе çитерет, тĕпчев сăнавĕсем ирттернĕ хыççăн вĕсене пичетлесе кăларать. Учительсен сĕнĕвĕсене М.К. Волков тĕплĕн шута илет, кашни кăларăмрах учебниксенчи материала улшăнусем кĕртет. Кивĕллех ĕçлеме хăнăхнă учительсем тиркеме пăхаççĕ ку учебниксене, мал ĕмĕтлисем вара хапăлласа йышăнаççĕ.

– Мана вĕсем шыва кĕмесĕрех ишме вĕрентекен инструктор-плаврuксем пек туйăнатчĕç, – тет кивĕллех ĕçлеме пăхакан учительсем çинчен М. Волков. – Шывпа йĕпенмесĕр ишме вĕренеймĕн, çавăн пекех çăвар уçса калаçмасăр та ни чăвашла, ни вырăсла калаçма вĕренме çук.

Юлашки вăхăтра педагогикăна çирĕппĕн кĕрсе вырнаçакан шухăшсем (чи малтан, ачасен харкамлăхне аталантарассине тĕп вырăна лартни) – иртнĕ ĕмĕртех çуралнă шухăшсем. Çав шухăшсене аталантарса наука шайĕнче татса парас ĕçре М. Волков тӳпи питĕ пысăк.

М.К. Волков Çĕрпӳ районĕнчи Еншик Чуллă вăтам шкулĕнче директор çумĕ пулнă вăхăт шкулсенче чăваш чĕлхине хĕсĕрлеме пуçланă тапхăрпа тӳр килет. Ачасем вырăсла япăх пĕлӳ илнин сăлтавне тăван чăваш чĕлхи çине ытлашши тимлĕх уйăрнипе сăлтавласа вырăс чĕлхипе литератури сехечĕсене ӳстерсе яраççĕ, чăваш чĕлхипе литература сехечĕсене чакарса хураççĕ. Чăваш диаспори пурăнакан регионсенче вара (Тутарстанпа Пушкăртстансăр, Ульяновскпа Самар облаçĕсенчи хăш-пĕр шкулсемсĕр пуçне) чăваш чĕлхине пачах вĕрентме пăрахаççĕ. «Ашшĕ-амăшĕсен кăмăлне шута илсе» чăваш «чĕпписене» 1-мĕш класранах вырăсла вĕрентме пуçлаççĕ. (Вырăс облаçĕсенчи тӳресемпе паян чăваш чĕлхине шкул планне кĕртесси пирки çăвар уçса пăх-ха – наци кадрĕсем çук тесе хуравлаççĕ. Сăмах май каласан, паян та шкулта чăваш чĕлхине май пулсанах хĕсме пăхаççĕ.)

Учительсен урокĕсене сахал мар итлесе курнăскер, М. Волков çакна асăрхать. Пуш уйăхĕнче вырăс чĕлхи учебникĕн вĕçне тухаççĕ те словарьпе ĕçлеме пуçлаççĕ. Кашни урок валли ачасен килте 10-15-шер сăмах пăхмасăр калама вĕренмелле. Тепĕр урокра вара учитель вĕсем мĕн вĕренме пултарнине тĕрĕслет кăна иккен. Паллах, пурте унашкал ĕçлемен ĕнтĕ.

1980 çулсенче Михаил Константинович Раççейри Çут ĕç министерствин комиссийĕ йышĕнче пулса Чăваш Республикинчи пĕтĕмĕшле вĕрентӳ ĕçне сăнаса тĕрĕслес ĕçе хутшăнать. Ачасен пĕлĕвĕсене тĕрлĕ районсенче тĕрĕслесе хак панă хыççăн Федераци министерстви приказ кăларать. Приказра Чăваш Республикинчи шкулсенче чăваш чĕлхине хисеплеменнине палăртнă, вырăнти пуçлăхсене самаях ятланă. Çакă ун чухне чăваш чĕлхи пĕлтерĕшне ӳстерме, хула шкулĕсенче ăна вĕрентме пуçлас ыйтăва питĕ çăмăллатнăччĕ. Шăпах çавăн хыççăн ĕнтĕ çанă тавăрсах чăваш чĕлхине хула шкулĕсенче вĕрентмелли программăсемпе учебниксем хатĕрлеме пуçларăмăр. Чи малтанхисем Г.В. Лукояновпа С.П. Юшков пулчĕç.

М.К. Волков 1983 çултанпа Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳ министерствин Вĕрентӳри наци проблемисене тĕпчекен институтăн Чăваш лабораторийĕн заведующийĕ пулса ĕçлет. Сăмах май каласан, ку института Мускавра 1949 çулта уçнă. Шăпах çак институт тăрăшнине пула Раççейри нумай-нумай шкулсенче тăван чĕлхесене вĕрентессине упраса хăварма май килет. Институтра вырăс мар чĕлхесене тата вырăс чĕлхине иккĕмĕш чĕлхе пек вĕрентессипе Раççей тата тĕнче шайĕнче палăрнă меслетçĕсем ĕçленĕ: Р.К. Черняков, В.М. Чистяков, В.В. Горбунов, Р.Б. Сабаткоев, Н.М. Хасанов т. ыт. те. Чăваш меслетçисем З.Ф. Мышкин, М.М. Михайлов, Г.А. Анисимов институтăн штатра тăман сотрудникĕсем пулнă.

Çак институтра ĕçленĕ çулсенче М. Волков тĕрлĕ комиссисемпе бригадăсен йышĕнче тата пĕччен те çĕр-шыв тăрăх сахал мар çӳрет. Çĕпĕрти, Çурçĕрти, Инçет Хĕвел тухăçĕнчи регионсенче вырăс тата тăван чĕлхесене вĕрентес ĕçе тĕрĕслесе хак парать, отчетсемпе справкăсем çырса Федераци министерствине тăратать.

Пĕтĕм пурнăçне Михаил Константинович шкул практикине çĕнĕ технологисене кĕртессине халаллать. Ларусенче, тĕл пулусенче, тĕрлĕрен семинарсенче уйрăм учительтен пуçласа вĕрентӳ министрĕ таран çĕнĕлле ĕçлеме кирлине ĕнентерессишĕн тăрăшать.

– Эпĕ нихçан та пуçлăхсене юрасчĕ тесе тăрăшмарăм, – тет М. Волков хăйĕн пурнăç çулне аса илсе. – Пĕтĕм ĕмĕт вырăс тата чăваш чĕлхисене ачасене лайăхрах вĕрентессиччĕ. Нумай çул хушши юнашар ĕçленĕ меслетçĕсемпе шкул учителĕсене, тӳресене (Н.Ф. Артемьева, А.В. Волкова, Е.В. Казакова, Р.И. Бескоровайная, Н.Н. Чернова, А.П. Никитин т. ыт. те) пĕр-пĕрне ăнланса ĕçленишĕн, сапăр пулнишĕн чĕререн тав тăватăп.

Эпир те 80 çул тултаракан Михаил Константинович Волкова, вĕрентекенĕмĕре, чĕререн сума суса саламлатпăр, çирĕп сывлăхпа вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

**Т.В. АРТЕМЬЕВА,** *И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăв. пат. пед-ка ун-ĕн доценчĕ;*
**А.Р.КУЛЬЕВА,** *Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн проректорĕ;*
**О.И. ПЕЧНИКОВ,** *И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăв. пат. ун-ĕн доценчĕ;*
**Н.И.ПРОКОПЬЕВ,** *педагогика ветеранĕ*